26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
30
ЭРНЕКУН
152(6389) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔН
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Колхозсемпе МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕ

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Пысăк тухăçлă тырпулшăн тата колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн МАЛТАНХИ ИТОГĔСЕМ

ССР Союзĕн Наркомземĕ, пысăк тухăçлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх пăхса тухса, ăмăртăвăн условийĕсем тăрăх, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илмелли кандидатсем тесе çуракин государственнăй планне иртерсе тултарнă çак облаçсене, крайсене тата республикăсене йышăннă:

1. Краснодар крайĕ.
2. Мускав облаçĕ.
3. Калинин облаçĕ.
4. Киргиз ССР.
5. Ярославль облаçĕ.
6. Иваново облаçĕ.
7. Горький облаçĕ.
8. Ставрополь крайĕ.
9. Узбек ССР.
10. Грузин ССР.
11. Тула облаçĕ
12. Чăваш АССР.
13. Казах ССР.
14. Орел облаçĕ.

Çак облаçсем, крайсем тата республикăсем колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе те лайăх результатсем кăтартнă.

ССР Союзĕн Наркомземĕ çуракин ĕçĕсене çак облаçсемпе республикăсем ăнăçлăн туса ирттернине палăртнă: Архангельск, Ворошиловград, Иркутск, Смоленск, Ленинград, Харьков облаçĕсем, Кабардино-Балкар; Коми тата Чечено-Ингуш АССР-сем.

ССР Союзĕн Наркомземĕ, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртăвăн условийĕсем тăрăх, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илмелли кандидатсем тесе выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе лайăх результатсем панă çак облаçсемпе республикăсене йышăннă:

1. Иваново облаçĕ.
2. Мускав облаçĕ.
3. Вологда облаçĕ.
4. Ярославль облаçĕ.
5. Горький облаçĕ.
6. Таджик ССР.
7. Архангельск облаçĕ.
8. Бурят-Монгол АССР.
9. Чăваш АССР.
10. Калинин облаçĕ.

Çак облаçсемпе республикăсем çуракин ĕçĕсене те ăнăçлăн туса ирттернĕ.

ССР Союзĕн Наркомземĕ колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Азербайджан ССР, Казах ССР тата Рязань облаçĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Наркомземĕнче

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Наркомземĕ МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн малтанхи итогĕсене (суракинчи результатсем тăрăх) пăхса тухса, ăмăртăвăн условийĕсем тăрăх, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илмелли кандидатсем тесе çак облаçсене, крайсене тата республикăсене йышăннă (вĕсен машинно-тракторнăй станцийĕсем тракторпа тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ыттисенчен лайăхрах результатсем панă):

1. Мускав облаçĕ.
2. Смоленск облаçĕ.
3. Ленинград облаçĕ.
4. Приморье крайĕ.
5. Таджик ССР.
6. Туркмен ССР.
7. Архангельск облаçĕ.
8. Горький облаçĕ.
9. Грузин ССР.
10. Армян ССР.
11. Киргиз ССР.

Çак облаçсем, крайсем тата республикăсем çуркунне сухаласси ĕçе те ăнăçлăн туса ирттернĕ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Наркомземĕ çак крайсемпе республикăсенчи машинно-тракторнăй станцисем тракторпа тумалли ĕçсен планне ăнăçлăн тултарнине палăртнă: Кабардино-Балкар АССР, Коми АССР, Ставрополь крайĕ, Чечено-Ингуш АССР тата Чăваш АССР.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛ енче наступлени туса пырса, 4—6 километр малалла куçнă тата халăх пурăнакан 50 ытла пункта йышăнса илнĕ.

БЕЛГОРОД енче—разведчиксем шыраса çӳренĕ, уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем пулса пынă, çав çапăçусенче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене татах та лайăхлатнă.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче пирĕн войскăсем Мга хулинчен çурçĕререхри тата хĕвелтухăçнерехри районсенче вырăнти çапăçусем туса пынă, çав çапăçусенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Кăнтăрта, Донбасра, разведчиксем вăйлăн шыраса çӳренĕ.

Июлĕн 26-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 90 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 44 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕререхре пирĕн войскăсем малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тата пахи вырăн йышăнса тăракан чылай высотăсене йышăнса илнĕ. Пĕр часть йышăнса илнĕ высота çинче тăшманăн 400-ре çити виллине тупнă. Нимĕçсен 14 танкне тата 4 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр тĕреклетнĕ пунктшăн хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Çав пункт темиçе хутчен те алăран алла куçнă. Каç пулнă тĕлелле пирĕн подразделенисем, флангран пырса çапса, нимĕç пехотин батальонне аркатса тăкнă та çав тĕреклетнĕ пункта хăйсен аллине çирĕп тытса илнĕ.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем малалла куçнине тăшман вăйлăн персе тата контратакăсем туса чарса лартма хăтланнă. Гитлеровецсен контратакисене пурне те, вĕсене пысăк çухатусем тӳстерсе, сире-сире пăрахнă. Халăх пурăнакан икĕ пунктшăн пынă çапăçура пирĕн подразделенисем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне, 18 танкне тата хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 6 орудине пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени боецĕсем, тăшманăн темиçе контратакине сирсе пăрахса тата тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем халăх пурăнакан çав пунктсене каялла таварма хăтланнисем ăнăçсăр пĕтсе ларнă. Пирĕн чаçсем йышăнса илнĕ позицисене çирĕплетнĕ те малалла куçса пыраççĕ.

Орелран кăнтăрарахра тăшман хушăри рубежсем çинче чарăнса ларма хăтланать, анчах совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе унăн ирĕксĕрех пĕр позици хыççăн теприне пăрахса хăварма лекет. Пĕр соединени, малалла куçса пырса, икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 26 танкне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Белгород енче пирĕн разведчиксем активлăн кĕрешнĕ. Воскресенко лейтенант икĕ автоматчикпа пĕрле çăмăл танк çине ларса тăшман позицийĕсем патне çĕмĕрсе кĕнĕ те хăйсем асăрханă тĕллевсем çине персе, гитлеровецсене пĕр взвода çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пĕр чаçăн боецĕсем тăшмана атакăланă та унăн траншейисене çĕмĕрсе кĕнĕ. Алвĕççĕн тăрса çапăçса нимĕçсен 80 салтакне пĕтерсе тăкнă. Тытăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Изюмран кăнтăрарахра пирĕн чаçсем хăйсем йышăнса илнĕ рубежсем çинче çирĕпленсе ларнă тата разведка туса пынă. Пĕр соединенири артиллеристсем тăшманăн 40 ытла огневой точкине пĕтерсе тăкнă, 4 наблюдательнăй пунктне ишĕлтернĕ, 6 кĕпçеллĕ икĕ миномета тата тăшманăн прожектор установкине персе çĕмĕрнĕ. Пĕр участокра красноармеец Гоглин юлташ тăшманăн дзочĕ патне сиктермесĕр шăвăнса пынă та дзотăн амбразурине граната вăркăнтарнă. Чĕрĕ юлнă нимĕçсене тыткăна илнĕ. Бронебойщиксем Трушевпа Ляпунов юлташсем оборонăн малти хĕррин лешьенче засадăра ларнă. Часах вĕсем пирĕн позицисем патне сывхарса килекен нимĕç танкне асăрханă. Бронебойщиксем темиçе хут персе нимĕç танкне вут хыптарнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехе, совет войскисем юлашки çапăçусенче мĕнлĕ позицисем йышăнса илнĕ района, нимĕçсем çĕнĕ чаçсем илсе пынă. Ансăр участокра пехотăн танксем пулса тăратса, тăшман темиçе хутчен те контратака туса пăхнă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсен контратакисене пурне те сирсе пăрахнă. Тăшман чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Полесье облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç гарнизонне кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Партизансем 70 гитлеровеца вĕлернĕ те 4 станковăй пулемет, миномет, боеприпассен складне тата нимĕçсем халăхран туртса илнĕ ĕне выльăхсене 150 пуç тытса илнĕ. Выльăхсене вырăнти халăха таварса панă. Полесьери тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Паровоз, войскăсем ларса пыракан 18 вагон тата горючи тултарнă икĕ цистерна çĕмĕрĕлнĕ. Партизан-разведчиксем çакна курнă: крушени пулнă вырăна пынă санитарипе юсав командисем вагонсен çĕмрĕкĕсем айĕнчен нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен нумай виллисене туртса кăларнă.

* * *

СС «Адольф Гитлер» ятлă танковăй дивизин мотострелковăй полкĕнчи 6-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Бухерпфенниг çапла каласа панă: «Июлĕн 4-мĕшĕнче рота командирĕ—оберштурмфюрер Герте Гитлерăн приказне вуласа пачĕ. Çав приказра: ырăн нимĕç çарĕ генеральнăй наступлени пуçласа ярать, ку наступлени хĕвелтухăçĕнчи вăрçă ĕçĕсем мĕнпе пĕтессине татса пама тивĕçлĕ, тесе каланă. Герте салтаксене: Курска тытса илнĕ хыççăн наступлени хутшăннă кашни салтака нумай вăхăтлăха отпуск параççĕ, тесе шантарчĕ. Июлĕн 5-мĕшĕнче ирех наступлени пуçланчĕ. Малтанхи утăмсенчех вырăссем пире вăйлăн хирĕç тăрса кĕтсе илчĕç. 9 кун хушшинче дивизи пĕтĕмпе те 20 километр кăна малалла куçрĕ, çакăнпа пĕрлех вăл хăйĕн личнăй составĕнчен 70 процента çити çухатрĕ. Анчах чи киревсĕрри умра пулнă. Пачах та кĕтмен çĕртен вырăссем контрнаступлени пуçласа ячĕç те пире эпир наступлени тунă чухнехинчен чылай хăвăртрах каялла чактарчĕç. Пирĕн хыçра, çапăçу хирĕнче, нимĕç салтакĕсен нумай пин виллисем, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ тата пăрахса хăварнă техника нумай вырта юлчĕ. Нимĕç çарĕн памăс уйхирĕнче Германи çĕнтерессин юлашки шанчăкĕсене те çĕр айне пытарнă ĕнтĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла сыхçиенĕсем хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче мирлĕ çынсене вĕлерсе пĕтереççĕ. Житомир облаçĕнчи Копище ялĕнче гитлеровецсем июлĕн 13-мĕшĕнче тăварла шăрпăк сутасси çинчен хрестьянсене пурне те пĕлтернĕ. Улгаласси çинчен шухăшламан çынсем, пурнинчен ытларах ватă çынсемпе хĕрарăмсем, пысăк ушкăнпа лавка умне пухăнса тăнă. Нимĕçсем пухăнса тăнă çынсем çине автоматсенчен пеме тытăннă. Фашистла палачсен аллинчен нимĕн айăпсăр мирлĕ совет çыннисем нумай пĕтнĕ.

ИЮЛĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 28-мĕшĕнче ОРЕЛ енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă, 4—6 километр малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутрах СТАНОВОЙ КОЛОДЕЗЬ ятлă чугунçул станцийĕ (Орелран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре 18 километрта).

БЕЛГОРОД енче, ДОНБАСРА тата КРАСНОДАРТАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРЕ разведчиксем кĕрешнĕ.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче разведчиксем вăйлăн çапăçнă тата икĕ енĕ те артиллерирен хирĕ-хирĕç персе тăнă.

Июлĕн 27-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 32 танкне персе çĕмĕрнĕ тата пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе противникăн 62 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕререхре совет войскисем нимĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хĕссе кăларнă. Противник автомашинăсемпе васкасах резервсем илсе пырать те вĕсене çапăçăва çийĕнчех кĕртсе ярать, наступлени тăвакан совет чаçĕсене хирĕç тăма хăтланать. Болхов районĕнче пĕр часть противника флангран пырса çапса, тăшманăн кунта кĕрешекен войскисене хупăрласа илес хăрушлăх туса хунă. Нимĕçсем васкасах каялла чакнă, çавăн чухне çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пирĕн наступлени тăвакан войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем çак участока танксен полкне куçарнă та контратака тунă. Совет боецĕсем тăшмана каялла хăваласа янă, ăна йĕрлесе пырса, вăйлă тĕреклетнĕ пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла, 11 танк тата 5 оруди пĕтерсе тăкнă. 2 оруди, 100 пулемет ытла тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Орелран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени противникăн 4 контратакине сирсе ярса, нимĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1500 çити вилли выртса юлнă. Нимĕçсен 18 танкне, вăл шутрах «тигр» йышши 3 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 4 орудине тата 4 противотанковăй орудине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Соединени боецĕсем противникăнне 15 оруди, 18 миномет, артиллерин 3 складне тата тĕрлĕ япаласен 2 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра Кузнецов капитан командир пулса тăракан подразделени, старши лейтенант Ирхов ертсе пыракан подразделенипе пĕрле кĕрешсе, пысăк яла йышăнса илнĕ. Çав яла хӳтĕлекен нимĕçсен йышĕ наступлени тăвакан совет боецĕсен йышĕнчен чылай пысăк пулнă. Çапах та пирĕн подразделенисем хăварт пырса çапнине противник тӳсс тăрайман. Пирĕн боецсем гитлеровецсене нумайĕшне вĕлерсе пĕтернĕ, çав яла нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă.

* * *

Белгород енче разведчиксем активлăн кĕрешнĕ. Старши лейтенант Давыдов командир пулса тăракан рота, хăварт куçса пырса, противникăн траншейисене кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн тăрса хаяррăн çапăçса, пирĕн боецсем темиçе вуншар гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, ыттисем вара тарма тытăннă. 5 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Рота çĕнĕ рубежра çирĕпленсе ларнă.

* * *

Кăнтăрта, Донбасра, пирĕн подразделени разведка тăвас шухăшпа нимĕçсене атакăланă та икĕ çӳллĕ вырăна йышăнса илнĕ. Çав çӳллĕ вырăнсемшĕн пынă çапăçура нимĕçсен 3 танкне тата противникăн 200 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 7 самолетне персе ӳкернĕ тата 3 самолетне çĕмĕрнĕ. Кунсăр пуçне, противникăн 8 самолетне зенитнăй артиллерирен персе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче, Мга хулинчен çурçĕртерехри тата хĕвелтухăçнерехри районсенче, совет артиллеристчĕсем нимĕçсен вуншар дзочĕсене ишĕлтернĕ тата противникăн 63 огневой точкине пусарса лартнă. Снарядсемпе тĕл тивертсе, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă.

Ленинград патĕнчи сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, противникăн 3 самолетне зенитнăй артиллерирен персе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Житомир облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекен партизансен отрячĕ июлĕн 20-мĕшĕнче шоссе çулĕ çинче засада тунă. Засада тунă вырăна нимĕç пехотин колонни пырса çитсен, партизансем пулеметсенчен пеме тытăннă тата гитлеровецсем çине ручной гранатăсем вăркăнтарнă. Нимĕçсем хăраса ӳксе тарса саланнă, çул çинче вĕсен 80 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă. Ровенски облаçра кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ виçĕ кун хушшинче минăсем лартса нимĕçсен 6 эшелонне, фронт линийĕ патне каяканскерсене, сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 216-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 396-мĕш полкри 6-мĕш ротăн тыткăна лекнĕ командирĕ Дитрих Герлах çапла каласа панă: «Пирĕнтен нумайĕшĕ çуркуннехе çуллана чăтаймасăр тата пысăк шанчăк хурса кĕтрĕç. Çанталăк юсансанах Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем Хĕвелтухăçĕнче ывтăнса вырăссене юлашки хут пырса çапарса эпир шутне ĕненсе тăнă. Анчах та нимĕç çарĕ Курск çине наступлени тума пуçласанах ĕçсем эпир кĕтнинчен пачах урăхла пулса пычĕç. 216-мĕш дивизи хăйĕн умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртеймерĕ. Манăн рота вырăссен траншейисене кĕрсе кайрĕ, анчах унăн малтанхи рубежа каялла чакма лакрĕ, çавăн чухне вăл салтаксене çуррине ытла çухатса хăварчĕ. Наступлени çакăн пек ăнăçсăр пуçланни мана тĕлĕнтерчĕ. Эпĕ мĕнпĕн капла пулнине ăнланса илеймерĕм. Пирĕн вăйсем чылай ытларах пулнă. Эпир çапăçма лайăх хатĕрлентĕмĕр, пурне те малтанах шута илсе хутăмăр. Анчах малашнехи ĕçсем çакна кăтартса пачĕç: нимĕç командованийĕ Хĕвелтухăçĕнче вăрçас тĕлĕшпе тунă çуллахи планĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларчĕç. Нимĕç войскисем Курск патĕнче поражени тӳсни пысăк йывăрлăхсем патне илсе пыма пултарать.»

* * *

Орел облаçĕнчи Хĕрлĕ Çар чаçĕсем ирĕке кăларнă Тулянский поселокра пурăнакан М. Спиридоновпа П. Макарочкин нимĕçсен фашистла мерзавецĕсен тискер ĕçĕсем çинчен каласа панă. Поселокра пурăнакансене гитлеровецсем пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ. Фашистла ирсĕрсем ним айăпсăр çынсене нумайĕшне асаплантарса вĕлернĕ, хĕрарăмĕсенчен мăшкăлланă. Нимĕç палачĕсем 10—11 çулти виçĕ арçын ачана: Колесникова, Ефремова тата Осокина вĕсем нимĕç офицерĕн пирусне вăрланă тесе çакса вĕлерĕ. Гитлеровецсем çав ачасене çакса вĕлермелли виселицăсене вĕсен килĕсем умне лартнă. Фашистла сыхçиенсем виçĕ кун хушши ачасен ӳчĕсене виселицăсем çинчен илме ирĕк паман.

Çулпуç приказĕ тата лайăхрах ĕçлеме хушать

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ приказне Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шуртаври «Малалла» колхоз членĕсем вырăна савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Кашни бригадăрах кĕске митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксем Сталин юлташăн приказне ĕçпе ответлеме пулчĕç.

— Верховный Главнокомандующийĕн приказĕ пире тата вăйлăрах ĕçлеме хушать. Тырра вăя шеллемесĕр ĕçленипе эпир çĕнтерӳ тупатпăр. Манăн жнейкăпа талăкра 4-шар гектар тырă вырмалла. Приказ çине ответлесе, эпĕ кулленех 5—6-шар гектар тырă вырма сăмах паратăп,—терĕ митингра колхоз машиновечĕ Егор Матюков.

Матуков юлташ тырă вырма тухнăранпа хăйĕн жнейкипе 26 гектар вырнă та ĕнтĕ. Паян Матюков юлташ 16 сехет хушшинче 6 гектар вырчĕ.

Çавăн пекех ытти колхозниксемпе колхозницăсем те Сталин юлташăн приказне итленĕ хыççăн хастарлăн ĕçлеме пуçларĕç. 60 çулхи ватă колхозница Е. Николаева юлташ паян çурлапа 0,18 гектар тырă вырчĕ, комсомолкăсем М. Алексеева, Е. Сидорова юлташсем 0,20-шер гектар тырă вырчĕç.

«Малалла» колхоз кĕрхи тырăсен 63 процентне вырса пухнă ĕнтĕ, авăн çапма та пуçланă.

КАНАШ, июлĕн 28-мĕшĕ.
(Хамăр корр.).

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, июлĕн 27-мĕшĕ. (**Телефонпа**). «Малалла» колхозра Сталин юлташăн приказне радиопа итленĕ хыççăнах митинг туса ирттернĕ.

Икĕ фронтовикăн амăшĕ 60 çулхи Матрена Егорова хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Манăн икĕ ывăлăм—Кузьмапа Алексей—фронтра тăшманпа çапăçаççĕ. Эпĕ те фронтра çĕршыва пулăшас тесе ырми-канми ĕçлетĕп. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, эпĕ малашне татах та тăрăшарах ĕçлеме сăмах паратăп.

Егорова юлташ колхозра хастарлăн ĕçлет, ытти колхозницăсене пример кăтартать. Халĕ вăл тырă вырнă çĕрте кулленхи нормăна 200 процент тултарса пырать.

Е. ПРОКОПЬЕВА.

Колхозсем государствăна тырă параççĕ

ЕЛЧĔК, июлĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ войскăсене панă приказпа хавхаланса, вăл приказ çине ĕçпе ответлесе, районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем уборка ĕçĕсене татах вăйлатрĕç, государствăна 1943 çулшăн тырă пама тытăнчĕç.

Июлĕн 27-мĕшĕнче районри пур колхозсем те пекех хĕрлĕ обозсемпе Канашри «Заготзерно» пунктне тырă леçрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 37 лавран, «КИМ» колхоз 20 лавран, «Марс» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем 24-шар лавран тăракан хĕрлĕ обозсем организациленĕ. Çак кун Канашри «Заготзерно» пунктне пирĕн районри колхозсем пурĕ 167 лав тырă леçрĕç.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Государствăна çĕрулми параççĕ

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Районри колхозсем çĕнĕ çĕрулми пулса çитессе кĕтмесĕрех 1943 çулхи обязательство шучĕпе государствăна кивĕ çĕрулми параççĕ.

Качалаври «Труд» колхоз 266 центнер парса 1943 çулхи обязательствăна пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Кунсăр пуçне тата вăл хăйĕн колхоз членĕсемшĕн 66 центнер ытла пачĕ.

Сиверти Жданов ячĕпе тăракан колхоз та çак кунсенче хатĕрлев пунктне 400 пăт çĕрулми леçсе пачĕ.

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ пĕр промышленносри Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи иккĕмĕш уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш премие памалла тунă.

Пирĕн авиаци Орел, Брянск чугунçул узелĕсене тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Июлĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Орелпа Брянск чугунçул узелĕсене тата тăшманăн аэродромĕсене тапăннă.

Орелпа Брянск чугунçул узелĕсенче тăшманăн çар эшелонĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Нумай вагонсене çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă. Пирĕн самолетсен экипажĕсем вăйлă взрывсем пулнине палăртнă.

Çавăн пекех пирĕн авиаци тăшманăн аэродромĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Вăл аэродромсем çинче нимĕç самолечĕсем нумай пухăннă пулнă. Бомбăсем самолетсем хушшинче çурăлнине, антарсене тата аэродромри ытти сооруженисене те тӳремĕнех пырса тиввине асăрханă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Чугунçул работникĕсен кунĕнче массăллă воскресник пулать

Августăн 1-мĕшĕнче пирĕн çĕршывра чугунçул çинче ĕçлекенсен кунне паллă туса ирттерĕççĕ.

Августăн 1-мĕшĕнче чугунçула хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе воскресник пулса иртет. Çак ĕçе чугунçул çинче, хуласемпе поселоксенче тата район центрĕсенче ĕçлекенсем массăллăн хутшăнмалла. Предприяти руководителĕсен çак ответлă ĕçе пĕр çын юлмичченех явăçтарассишĕн тăрăшмалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе предприяти руководителĕсен воскресникре ĕçе йĕркелесе пыма ответлă çынсем палăртса хумалла. Чугунçул çинче ĕçлекен работниксен вăл кун тумалли ĕçсене малтанах палăртса хумалла.

Кировецсем чĕнсе калани çине ответлесе

КУСЛАВККА. (**Телефонпа**). Механически арманти рабочисемпе работницăсем Мускаври С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ «Динамо» заводри рабочисен чĕнĕвне сӳтсе-явса, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Арманта ĕçлекенсен коллективĕ, кировецсен чĕнĕвне ырласа, социализмлă ăмăртăва çĕнĕ çĕкленӳпе хутшăнчĕ, çулталăк планне Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă тĕле пурнăçлама, ĕç тухăçлăхне планпа палăртнинчен 10 процент ытларах ӳстерме, продукци хăйне ларакан хакне 2 процент чакарма, 8 пин киловатт-сехет электроэнерги перекетлеме обязательство илчĕ.

И. ШАРКОВ.

* * *

Шупашкарти «Красный кустарь» артельри рабочисемпе работницăсем те кировецсен паха пуçарăвне сӳтсе-явнă хыççăн хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

— Эпĕ ку таринччен ĕç нормине 150—160 процент пурнăçласа пынă, малашне 200 процент тултарма пулатăп,—тет стахановка Агатова юлташ. Артельри паллă стахановкăсем П. Климова, Е. Костылева юлташсем те задание виçĕ хут ытларах тултарма пулчĕç.

Коллектив ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстерме, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чакарма, çулталăк планне декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулчĕ. Çак обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе рабочисемпе работницăсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Кашниех вĕсем задание икĕ-виçĕ хут ытларах тултарма пулчĕç.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртер, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăнăртура мала тухар!

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ ИЮЛĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Тырă вырнă (процентпа)
Елчĕк	15,5
Тăвай	13,3
Калинино	11,3
Комсомольски	10,4
Куславкка	9,3
Чкаловски	8,8
Шăмăршă	8,8
Шăхасан	8,2
Вăрнар	7,6
Советски	5,9
Етĕрне	5,6
Канаш	5,3
Çĕрпÿ	5,3
Вăрнар	5,0
Сĕнтĕрвăрри	4,8
Октябрьски	4,5
Красноармейски	3,8
Улатăр	3,6
Хĕрлĕ Чутай	2,8
Первомайски	2,8
Кувакино	2,7
Пăрачкав	2,6
Çĕмĕрле	2,5
Элĕк	2,0
Сĕнтĕр	1,2
Ишлей	0,9
Йĕпреç	0,7
Шупашкар	0,7
ЧАССР тăрăх	5,9

* * *

Колхозлă ялта хĕрÿллĕ тапхăр — тырпулсене вырса пуçтарас тапхăр пуçланчĕ. Малта пыракан колхозсем тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе темиçе кун хушши ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Елчĕк, Чкаловски районсенчи чылай колхозсем кĕрхи тырăсене вырса пуçтарчĕç, çурхи тырăсене пухса кĕртме тытăнчĕç.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе Елчĕк, Тăвай, Калинино районĕсенчи ялхуçалăх артелĕсем пĕр харăс тата вăхăтра тытăнчĕç. Уяр вăхăтăн кашни сехечĕпе усă курса, çак районсенчи колхозсем юлашки пиллĕк кун хушшинче пиншер гектар ыраш тата çурхи тырăсем вырчĕç.

Анчах Йĕпреç, Ишлей, Сĕнтĕр, Элĕк, Çĕмĕрле районĕсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе сÿрĕккĕн тата кая юлса тытăнчĕç. Çак районсенчи нумай колхозсем, тырă тахçанах пулса çитнĕ пулин те, ăна вырма тытăнман та темелле. Райçĕрç пайĕсен заведующийĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе парти райкомĕсен секретарĕсем колхозсен правленийĕсене тата колхоз активне хăшпĕр колхозниксен кая юлнă шухăш-кăмăлĕсемпе кĕрешме вăхăтра мобилизацилемен. Çавăнпа тырпул пĕтĕм уйхирĕпех пиçсе çитессе кĕтсе, вĕсем тырă вырас ĕçе пуçăнмасăр тăчĕç. Çапла вара асăннă районсенчи нумай колхозсем тырпулсене пухса кĕртме тытăнмалли чи лайăх сроксене иртттерсе ячĕç.

Халĕ ĕнтĕ суйласа вырасси çинчен текех сăмах та пулма пултараймасть, мĕнпур колхозсен тырпулсене пухса кĕртме массăллăн тытăнмалла. Çанталăк йĕпе-сапаллă тесе ларни килĕшÿсĕр, мĕншĕн тесен республикăри чылай колхозсемпе районсен опычĕ çакна уççăн кăтартса парать: ĕçе юрăхлă кашни сехетпе пĕлсе усă курсан, тырпулсене вырас тата авăн çапас ĕçсене пĕр чарăнмасăр туса пыма пулать.

Тырă выршипе пĕр вăхăтрах халĕ пур колхозсенче те авăн çапмă тата хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарма пуçăнмалла. Ку тĕлĕшпе кашни колхоза пиллĕк кунлă заданисем панă, вĕсене нихăш колхоз та пурнăçламасăр тăмалла мар.

Верховный Главнокомандующий Сталин юлташăн приказĕ тата пирĕн республикăна уйхир ĕçĕсем енĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тунă малтанхи çитĕнÿсемшĕн кăсал каллех Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратни çинчен пĕлтерекен хыпар колхозниксене ĕç фронтĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать. Ялти коммунистсемпе комсомолецсен, районсен руководителĕсен таса тивĕçлĕхĕ — ялти ĕçсыннисен çак патриотла çĕкленнине ертсе пырасси, тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлăн вĕçлессипе пулса тăрать.

ВĔРЕНЕКЕНСЕМ КОЛХОЗ ĔÇĔНЧЕ

КАЛИНИНО. Аслăрассинчи тулашмар вăтам шкулта вĕренекенсем, вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, колхоз производствине активлăн хутшăнса ĕçлеме тытăнчĕç. Кашни ача кăçал колхозра 200 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлеме тума обязательство илчĕç. Т. Степанов, П. Михайлов, Г. Макарова, К. Игнатьева, А. Михайлова юлташсем уй-хире тислĕк кăларса, ирхи çĕртме туса, çум çумласа, унтă çулса 60—70 ĕçкунĕ турĕç. Вĕсем колхозра примерлă ĕçлессине пĕрлех колхозниксем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе те туса пыраççĕ. Хаçатсем вуласа тĕнчери лару-тăрупа паллаштараççĕ, уйăхра 4 хут «За высокий урожай» ятлă стена хаçачĕ кăлараççĕ.

Т. Волкова П. Владимиров жнейкăна çуртырри вырма хатĕрлеççĕ, халь вĕсем машина пайĕсене вĕренеççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Кутемерти тулламар вăтам шкул çулахи каникул вăхăтĕнче колхозра ĕçлеме ятарласа шкул ачисен отрядне йĕркеленĕ. Унта пурĕ 26 ача. Отряда К. Терентьева учительница ертсе пырать.

Пионерсемпе шкул ачисен отрячĕ каникул пуçланнăранпах «Путь Ленина» колхозра ĕçлет. Отряд членĕсем уйхирти çумкурăкĕсене тасатас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлерĕç. Вăтамран шутласан, вĕсенчен кашниех 42 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илнĕ.

Пионерсем каннă вăхăтра колхозниксене Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене, хаçатсенчи ытти материалсене те вуласа параççĕ. Бригадăсенче стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Тырă вырма тухнăранпа отрядра икĕ номер стена хаçачĕ тухрĕ. Шкул ачисен отрячĕ тырпулсене пухса кĕртес ĕçре тăрăшса ĕçлет.

Р. ЕРМАКОВА.

Лашасем вырăнĕнче — вăкăрсем

Çĕрпÿри Заготскот пункчĕн подсобнăй хуçалăхĕнче çуракине иртттерме лашасем пулман. Пунктра ĕçлекен Пуговкин юлташ лашасем вырăнĕнче вăкăрсене ĕçлеттерме сĕнÿ пачĕ, вăкăрсене ĕçе вĕрентессине хăй çине илчĕ. Пуговкин юлташ вăрçăччен Дон шывĕ хĕрринчи Ростов хулинчен инçех мар районра пурăннă. Вăкăрсене ĕçлеттерессин унăн тĕлĕнмелле ĕç пулман. Часах вăл 4 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Çапла вара Заготскот пункчĕ хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕнче çуракине вăкăрсен вăйĕпех ăнăçлăн туса иртттернĕ.

Халĕ тырпулсене пухса кĕртес вăхăт çитрĕ. Ку ĕçре те туртăм вăйĕ нумай кирлĕ. Заготскот пункчĕ çак ĕçре те çатсенчи ытти материалсене те вуласа шутлать.

И. МАЛГАЙ.

Хурт-хăмăр ăстаçи

СОВЕТСКОЕ. Çак юлашки çулсенче Тури Атакри «Крестьянская газета» колхоз хурт-хăмăр ĕрчетессипе палăрмалла ÿсĕмсемех турĕ. Утара организациленĕ чухне пурĕ те 12 çемье çеç пулнă, халĕ колхоз утарĕнче 124 çемье шутланать. Пыл хурчĕсене ĕрчетессипе колхозри пчеловод А. Суворов юлташ тăрăшса ĕçлет. Колхоз иртнĕ çулта пыл сутса 123 пин тенкĕ тупăш илчĕ, кăçал та 60 пин тенкĕлĕх сутнă. Пчеловод Суворов кăçал та пыл нумай пуласса ĕмĕтленет.

Я. СИГАЙ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ СИЛОС ХЫВАС ĔÇ ИЮЛĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (ПРОЦЕНТПА)

Районсем	Çулталлăкри плана тултарнă
Элĕк	127,8
Çĕмĕрле	103,1
Йĕпреç	101,3
Шупашкар	100,0
Шăмăршă	100,0
Комсомольски	94,6
Канаш	93,1
Октябрьски	91,6
Вăрнар	91,4
Шăхасан	90,6
Сĕнтĕрвăрри	87,5
Елчĕк	86,2
Чкаловски	85,0
Первомайски	83,6
Çĕрпÿ	83,0
Тăвай	82,1
Улатăр	78,0
Красноармейски	77,9
Ишлей	77,2
Советски	77,2
Кувакино	76,8
Калинино	74,4
Етĕрне	73,3
Пăрачкав	72,4
Вăрмар	70,2
Сĕнтĕр	61,7
Хĕрлĕ Чутай	51,7
Шупашкар хули	20,0
ЧАССР тăрăх	83,3

Силос хывăмăр

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Чылай колхозсем кăçал силос хывмалли плана иртттерсе тултарчĕç. Хирлепнуçĕнчи «Красный Октябрь» колхоз членĕсем планран иртттерсе 39 тонна хыврĕç. Хирлепри Буденный ячĕпе тăракан тата Ильинкинăри «Красная Армия» колхозсем силос хывмалли плана 125-шер процент тултарчĕç.

Вутланти «Большевик» колхоз членĕсем кашни çулах обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли ытларах сĕтеклĕ апат хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Ку таранччен вĕсем 130 тонна силос хыврĕç. Колхоз утă тата симĕс çулçă та çителĕклĕ хатĕрленĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Уборкăна тухиччен вăхăтпа туллин усă курса, эпир, «Коминтерн» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем, выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат хатĕрлесе çитерессишĕн çине тăрса ĕçлерĕмĕр. Сырмаçатрасенчи мĕнпур пек курăка, çумкурăкĕсене пурне те пухса 70 тонна силос хатĕрлесе хутăмăр. Çак ĕçе 13 комсомолец тата ялти 23 çамрăк, вăл шутра учительницăсем те, активлăн хутшăнчĕç.

З. НИКИТИН.

Комсомолăн «Коминтерн» колхозри пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

ВЫЛЬĂХ ВИТИСЕНЕ ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕР

Çĕрпывта Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç малашне те ытлăн-çитлĕн парса тăма пирĕн колхозсен кăçал çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ÿстермелле, выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне хăпартмалла. Çак ответлă ĕçе вĕçне çитиччен тĕклĕн пурнăçлас тесен, кашни колхозăн выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç базине çирĕп хывса хăвармалла тата мĕнпур выльăхсем валли ăшă витесем хатĕрлемелле.

Çак задачăсене пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн Комсомольски районри колхозсем халĕ выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлес енĕпе чылай ĕçсем туса иртттерчĕç. Районри 18 колхоз, тĕпрен илсен, выльăх-чĕрлĕх усрамалли витесене хĕле хатĕрлесе çитерчĕç. 39 колхозра 1969 пуç лаша, 46 колхозра 1859 пуç ĕне, 47 колхозра 941 пуç пăру, 42 колхозра 6.773 пуç сысна, 36 колхозра 6.350 пуç сурăх, 45 колхозра 13.125 пуç чăх-чĕп вырнаçтарса усрамалăх витесем юсаса хатĕрленĕ.

Çĕнĕ строительство та ăнăçлăн пулса пырать: Кăçал пирĕн колхозсем лашасем валли çĕнĕрен пĕр вите, пăрусем валли—улттă, сыснасем валли—виççĕ, сурăхсем валли—пиллĕк тата чăх-чĕп валли пĕр вите тăваççĕ. Ку витесене çĕнĕрен 50 лаша, 186 пăру, 550 пуç сысна, 850 пуç сурăх тата 350 пуç чăх-чĕп вырнаçмалла. Çĕнĕ строительство вĕçленсе пырать. Асăннă витесенчен чылайĕшĕ ĕнтĕ выльăхсене йышăнма хатĕр.

Выльăх-чĕрлĕх витисене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçĕн ăнăçлăхне колхозсенче строительство бригадисем организациленни татса пачĕ. Фермăсенче ĕçлекен работниксем те витесене хĕле хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем выльăх-чĕрлĕхе хĕлле лайăх пăхса усрамалли условисене пурне те туса çитерессишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ.

Шмидт ячĕпе тăракан, «Красное Сормово», «Искра 1», «Красный Октябрь», «Трактор» колхозсенче выльăх витисем тăвакан тата юсакан бригадăсен ĕçне фермăсен заведующийĕсем хăйсем ертсе пычĕç. Ĕç хăварт та тĕплĕн пулса пычĕ. Ку колхозсенче утă çулса пухас ĕç те ăнăçлăн пулса иртрĕ, ферма работникĕсем силос хатĕрлес ĕçе пĕтĕмпе тенĕ пекех хăйсен вăйĕпе пурнăçларĕç.

Строительство бригадисем ĕçĕн пахалăхĕшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ, вырăнти материалсемпех усă курса витесене тĕплĕн юсаççĕ, ăшă тăваççĕ.

Йывăç витесене тул енчен те, шал енчен те тăмпа шăлса лартаççĕ. Витесен тăррисене, урайĕсене юсаççĕ, алăксене лайăх уçăлса хупăнмалла тăваççĕ.

1943 çулăн улттă уйăхĕ хушшинче пирĕн районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕне выльăхсем енĕпе 93 процент, сыснасем енĕпе 110 процент, сурăхсем енĕпе 110 процент тултарчĕç. Вăхăта вăраха ямасăр пур фермăсене те выльăхсемпе комплектласа çитермелле, контрактациленĕ çамрăк выльăхсене фермăсене пухас ĕçе халех вĕçлемелле. Выльăхсен пĕтĕм йышĕ валли витесем юсаса хатĕрлер, ĕçе вĕçне çитиех тĕплĕн тăвар!

И. ГЕОРГИЕВ,

ВКП(б) Комсомольски райкомĕн секретарĕ.

Сезонри плана срокчен пурнăçларĕ

ЕЛЧĔК. Торф предприяти коллективĕ торф кăлармалли сезонри плана июлĕн 12-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ. Çĕршыва планран иртттерсе 700 тонна торф пачĕ. Торф кăларас ĕçри стахановкăсем А. Абрамова, Т. Маркова, В. Чумракова юлташсем кашни уйăхри задание 200—250 процент тултарса пыраççĕ. Торф предприяти коллективĕ июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне уйăхри плана 148 процент пурнăçланă. Халĕ вăл тепĕр икĕ çĕнĕ вырăнта торф кăларас ĕçе тытăнчĕ.

Кадрсене большевикла вĕрентсе çитĕнтерессишĕн

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн кадрсен отделĕ ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсен канашлăвне иртттерчĕ.

Унта партин Улатăр горкомĕн тата Пăрачкавпа Советски райкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсем Степанова, Голованов тата Архипов юлташсем кадрсемпе мĕнле ĕçлени çинчен докладсем туса пачĕç. Прение 13 çын тухса каларĕç.

Большевикла парти тата пирĕн аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ кадрсене тĕпчесе вĕренме, кашни работнике ĕçе уйăрса лартасси çине пысăк тимлĕхпе савăрăнса пăхма, ĕçе уйăрса лартнă чухне работникăн пултарулăхĕ ăçта ытларах тата хăвăртрах палăрма пултарасса шута илме, работниксене куллен пулăшса пыма вĕрентеççĕ.

Çакна ВКП(б) Улатăр горкомĕн кадрсен пайĕ тĕрĕс ăнланса илнĕ.

— ВКП(б) горкомĕн номенклатурине кĕрекен кадрсенчен пысăк пайĕ ертсе пыракан вырăнсенче вăрçă пуçланнăран çеç ĕçлеме пуçланă. Çавăнпа вĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе пысăк тимлĕхпе тăватпăр. Кадрсене час-часах улăштарас практикăна пĕтертĕмĕр. Ку ĕçре пире ертсе пыракан ырăнсене хĕрарăмсемпе вăрçă инвалидĕсене уйăрса лартни чылай пулăшрĕ,—тет Степанова юлташ.

Канашлу участникĕсем ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсенчи кадрсен пайĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Калинино, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Советски, Куславкка районĕсенче кадрсене çителĕксĕр пĕлеççĕ, вĕсене ĕçе уйăрса лартас тата вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлеççĕ. Чылай ВКП(б) райкомĕсем хăйсен номенклатурине кĕрекен кадрсене райком ларăвĕсенче çирĕплетес ĕçе вăраха тăсса пыраççĕ.

Канашлу ялхуçалăхĕнчи кадрсем хушшинче ĕçлесси уйрăмах çителĕксĕррине палăртрĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн тата ВКП(б) Обкомĕн решенийĕсене, сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнче пăснă. Унта 18 колхоз председательне ВКП(б) Обкомĕн кадрсен пайĕпе килĕшсе таталмасăрах улăштарнă.

ВКП(б) райкомĕсен кадрсен пайĕсен тепĕр пысăк çитменлĕхĕ вăл — ертсе пырас ĕçе хĕрарăмсене хăюсăррăн лартни пулса тăрать.

Хăшпĕр çĕрте ялхуçалăх кадрĕсем хушшинче ĕçлес ĕçре сезонлăх пурри палăрать. Вĕсемпе хĕлле кăна ĕçлеççĕ, уйхир ĕçĕсем пуçлансан ку ĕçе сÿрĕклетеççĕ.

Прение Исаева (Çĕрпÿ), Данилов (Канаш хули), Ананьин (Кувакино), Галкина (Кÿкеç), Андреев (Ишлей), Знаменская (Канаш), Атлашева (Октябрьское), Аверьянова (ВЛКСМ Обкомĕ), Енчиков (Шупашкар хули), Бубукин (Улатăр), Фомин (Ĕç резервĕсен управленийĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Канашлăва ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Лисин юлташ ертсе пычĕ.

Лисин юлташ канашлура тухса каларĕ. Вăл парти райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсен пайĕсем мĕнле ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ, ВКП(б) Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Куславкка райкомĕсен кадрсен пайĕсен ĕçне уйрăмах хытă критиклерĕ.

Канашлу вĕçленес умĕн ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Чарыков юлташ тухса каларĕ. Вăл промышленноçпа транспорт кадрĕсем хушшинче ĕçлес енĕпе юлашки вăхăтра хăшпĕр çитĕнÿсем тунă пулин те, ялхуçалăх кадрĕсемпе ĕçлесси çаплипех тивĕçлĕ вырăнта маррине палăртрĕ. Колхоз председателĕсене тăтăшах улăштарса тăрас сиенлĕ практикăна чылай çĕрте халĕ те пĕтермен-ха. Кадрсене тимлĕн вĕренмесĕрех ĕçе уйăрса лартас е кадрсен пултарулăхĕ палăрччен вĕсене ĕçрен хăтарас йĕркене пĕтермен. МТС-семпе чугунçул транспорчĕн кадрĕсем хушшинче ĕçлесси сÿрĕкленнĕ.

Чарыков юлташ кадрсемпе чăтăмлăн ĕçлеме, вĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе администрациле влаçĕпе мар, большевикла парти хушакан принципсемпе туса пыма хушрĕ.

Чарыков юлташ ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсен пайĕсене комсомол кадрĕсемпе ĕçлесси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхма хушрĕ.

Чарыков юлташ ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсене канашлу палăртнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешме чĕнчĕ.

„СССР Халăх художникĕ" ятне памалла туни

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, живопись, скульптура, графика, декоративнăй тата прикладной искусствăсене аталантарса пырас ĕçре тава тивĕçлĕ уйрăмах пысăк ĕçсем тунă изобразительнăй искусство деятелĕсене „СССР Халăх художникĕ" ятне памалла тунă.

Ку ята СССР Верховный Совет Президиумĕ парать.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ „РСФСР Халăх художникĕ" ятне памалла тунă. Ку ята РСФСР Верховный Совет Президиумĕ парать. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Италири лару-тăру

Фашистсен партине салатса янă

ЖЕНЕВА, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Италири Стефани агентстви çапла пĕлтернĕ: июлĕн 27-мĕшĕнче министрсен çĕнĕ составĕн малтанхи ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Бадольо председатель пулса ертсе пынă. Лару çапла йышăннă: «Итали çĕршывĕн политикăллă пурнăçĕнче çĕнĕ майсем паларса хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăннине кура, фашистсен партине салатса ярас». Çавăнпа пĕрлех министрсен совечĕн йышăнăвĕнче çакна асăннă: фашистсен партине пăхăнса тăнă «воспитани» паракан учрежденисем, çавăн пекех спорт учрежденисемпе ытти учрежденисем те «хăйсен ĕçне малалла та туса пыма пултарччăр» тесе кирлĕ мерăсем йышăннă.

Министрсен совечĕн çав ларăвĕнчех 1928 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче йышăннă закона пăрахăçа кăлармалла тунă, мĕншĕн тесен вăл закон «конституцилле ялани йĕркене килĕшсе тăма пултараймасть». (Асăннă закон тăрăх фашистсен партин аслă органĕ пулса тăнă «фашистсен аслă совечĕ» текен канашлу çав вăхăтрах государствăн верховнăй органĕ тесе шутланса тăнă).

Çавăн пекех министрсен совечĕ тата «государствăна хăтĕлесе тăракан специальнăй трибунала» та пĕтермелле тунă. Вăл трибунала парса тăнă ĕçсене Çар трибуналĕсене памалла тунă.

Сенат председателĕн отставки

ЖЕНЕВА, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио çапла пĕлтерет: Итали сенатĕн председателĕ граф Суардо отставкăна тухнă, унăн вырăнне Карло Таон ди Ревель адмирала лартнă.

Фашизма тата Германие хирĕçле демонстр[ацисем]

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Çурçĕр Италире нумай хуласенче король тата Бадольо чĕнсе каланисене пĕлтерсенех, фашизма хирĕçле массăллă демонстрацисем пуçланса кайнă. Милан соборĕ çывăхĕнчи Пьяцца дель Домо урамĕнче Германие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Турин урамĕсене темĕн чухлĕ халăх тухса тулнă. Халăх хушшинче: «Текех эпир Германишĕн хамăр çине бомбăсем пăрахтарасшăн мар!», «Германи кирлĕ мар!» тесе кăшкăрнă сассем илтĕннĕ.

ЖЕНЕВА, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарири радио çапла пĕлтернĕ: Миланра фашизма хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Миланри собор умĕнчи площадьре митинг пулнă. Фашистсен режимĕ çинчен астутаракан яталасене халăх пурне те тĕп тăвать. Фашистсен «Пополо д'Италиа» ятлă хаçачĕн редакцийĕнчи сĕтел-пукансене, шкапсене урамра çунтарса янă.

Швейцарипе Итали чиккинчи Таможнăри итальянец-чиновниксем хăйсен мундирĕсем çинчен фашистла значоксене пурне те татса ывăтнă.

Германири итальянец-рабочисем хăйсене киле яма ыйтаççĕ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германире ĕçлекен темиçе вун-шар пин итальянец-рабочисем июлĕн 26-мĕшĕнче ĕçе тухма килĕшмен. Вĕсем пурте хăйсене халех Италие яма ыйтнă.

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Сицили фрончĕн хĕвелтухăç енчи участокра патрульсем активлăн кĕрешеççĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн, Канада войскисем кăнтăр малалла куçнă. Американецсен 7-мĕш армин операцийĕсем планра кăтартнă пекех пулса пыраççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Сицилин хĕвелтухăç пайĕнче патрульсем активлăн кĕрешнисĕр пуçне урăх операцисем пулман. Канада войскисем хаяррăн çапăçаççĕ. Вĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине тата унти вырăнăн йывăр условийĕсене çĕнтерсе, çапла малалла куçса пынă. Тăшман салтакĕсене тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Эссен хулине питĕ хаяррăн тапăннă. Хулана пысăк сиен кÿнĕ.

Бомбардировочнăй авиацин ытти соединенийĕсем Гамбургри тата Кельнри чылай объектсене атакăланă. Çак асăннă операцисенчен 26 самолет каялла таврăнман.

Американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем ĕнер Çурçĕр Германири чылай объектсене хаяррăн тапăннă. Уйрăмăнах çак объектсене питĕ вăйлăн тапăннă: Канновертри каучук тăвакан заводсене, Гамбургри авиаци завочĕсемпе подводнăй лодкăсен верфĕсене, Вильгельмсхафен тата Везермюнд хулисен порчĕсенчи сооруженисене. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 50 самолетне ытла персе ÿкернĕ.

Çавăнпа пĕрлех союзниксен авиацийĕн соединенийĕсем тăшманăн Бельгири, Францири тата Голландири аэродромĕсене чылайĕшне тапăннă. Ку операцисенчен 26 самолет хăйсен базисене таврăнман.

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Гамбурга виçĕ хутчен хаяррăн тапăннă. Хула çинче халĕ те çаплах хура тĕтĕм тăрать. Подводнăй лодкăсем тăвакан чылай объектсене самаях сиенленĕ. Пуринчен ытла бомбăсем Германири подводнăй лодка тăвакан «Блемга Фосс» ятлă чи пысăк верфа лекнĕ. Çавăн пекех бомбăсем Гамбургри машинăсем тăвакан завода тÿрремĕнех лекнине палăртнă. Ку завод—Германин дизель-моторсем тăвакан чи пирлĕ центрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Киль хулинче бомбăсем çар валли суднăсем тăвакан верфь çине ÿкнĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Мессина районĕнче çапăçакан истребителĕсем июлĕн 25-мĕшĕнче тăшманăн 21 транспорт самолетне тата çав самолетсене хÿтĕлесе пыракан 5 истребителе персе ÿкернĕ.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ çапла тăшманăн Кăнтăр Италири чугунçул объекчĕсемпе ытти объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Çав операцисем вăхăтĕнче тăшманăн 11 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер кăнтăрла союзниксен авиацийĕ Хĕвеланăç Европăра пысăк операцисем чылай туса иртттернĕ. Тăшман вăйсăр хирĕç тăнă. Союзниксен пур самолечĕсем те хăйсен базисене таврăннă. Тăшманăн 16 самолетне персе ÿкернĕ. Июлĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен самолечĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем каллех Гамбурга хаяррăн тапăннă. Малтанлăха илнĕ даннăйсем тăрăх, бомбăсем пăрахни питех те пысăк результатсем панă. Авиацин ытти соединенийĕсем Рурти чылай объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Кăсхи операцисенчен 18 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Кельнра хĕспăшал хунă вăрттăн склад тупнă

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Швецсен «Гетеборгс Хандельстиднинг» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Кельнра хĕспăшал нумай хунă пысăк склад тупнă. Хаçат çапла çырать: Кельнра тата нимĕçсен ытти хулисенче те çавăн пек вăрттăн складсем нумай пулмалла, тесе шутлаççĕ. Нумаях пулмасть, гестапо вăрттăн кăларнă листовкăсем тата пропагандистла урăх материалсем те нумай тупнă.

Париж районĕнче чрезвычайнăй положени тунă

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтернĕ: нимĕç оккупанчĕсен влаçĕсем Сенăпа Уаза департаменчĕсенче тата Париж районĕнчи пĕтĕм халăха каç пулсан ирхине 6 сехетчен килтен тухма чарнă.

ХРОНИКА

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ И. М. Майский юлташа Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместительне лартнă.

Пĕлтерÿ

Августăн 1-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра лекци пулать. Лекци теми: **«Италире мĕнле ĕçсем пулса иртеççĕ».**

Лекцие лектор Рассудов юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Парти работникĕсен курсне техничкăсем, прачка тата швейцаркăсем кирлĕ.
Çак адреспа 9—18 сехетсем хушшинче ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Аптечная, 3, Парткурсы.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.

НТ 1792